

# Çитĕнӳсем хамăр алăра



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Ĕç тени пурăнмалли тĕп çăлкуç пулнă май, çынсем ĕçлеме, çак никĕс çинче пурнăç условийĕсене лайăхлатса пыма, хăйсен пултарулăх майĕсемпе туллин усă курма, обществăшăн усăллă пулма тăрăшаççĕ. Çавна май ялсенче хресчен-фермер хуçалăхĕ туса хурса тата ăна йĕркелемесĕр те çĕр ĕçĕпе пурăнакансем чылайăн. Тушкилтех акă, маларах та çырнăччĕха ун пирки, хресчен-фермер хуçалăхĕсем темиçе. Пурте тăрăшса, хавхаланса ĕçлеççĕ, ӳсĕмсем тăваççĕ: кам ĕне выльăх, тырă-пулă ĕрчетет, кам çĕрпе ĕçленипе пĕрлех лашасем е качакасем усрать, вĕсен йышне хушать. Çакă та пысăк пĕлтерĕшлĕ – пурте продукци калăпăшне тата унпа тивĕçтерессине ӳстерсе пыма вăй хураççĕ. Çак тĕллевпе малта пыракан çĕнĕ технологисемпе, ку чухнехи техника тата инвестици майĕсемпе усă курассине малти вырăна хураççĕ. Паха продукцие хăйсене кирлинчен ытла халăх валли туса илеççĕ.**

## Тăрăшса ĕçлесе хуçалăхăн ӳсĕмне хушаççĕ



♦ В.Кузьмина, Ю.Алексеев, Д.Алексеев

Илĕпĕр, тĕслĕхрен, Дмитрий Юрьевич Алексеевăн хресчен-фермер хуçалăхнех. Паянхи сăмаха шăпах ун пирки йĕркелесе пырасшăн эпĕ. Асăннă хресчен-фермер хуçалăхне 2013 çулта туса хунă. Тĕпрен илсен, районти хресчен-фермер хуçалăхĕсенчен ытларахăшĕ çак çулсенче чăмăртаннă та ĕнтĕ. Хуçалăх пуçлăхĕ, Дмитрий Юрьевич, Тушкил ялĕнче 1987 çулта çуралнă. Вăтам шкул пĕтерсен Шупашкарти И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕнĕ, строительство енĕпе пĕлӳ илнĕ. Университет пĕтернĕ хыççăн пĕр çулталăк Мускавра Президент полкĕнче службăра тăнă, унтан Шупашкарта «АККОНД» акционерлă обществăра строительство участокĕн начальникĕнче тăрăшнă. Пĕр хушă Мускавра та юлташĕсемпе пĕрле фирма уçса ĕçленĕ. Халĕ ялта, хăйĕн хуçалăх ĕçĕнче. Паллах, пĕччен мар, ăна ашшĕ, Юрий Алексеевич Алексеев, нумай пулăшать производствăна йĕркелесе пыма. Кам-кам та, вăл – хуçалăх ĕçĕнче пиçĕхнĕ çын. 1971–1991 çулсенче Тушкилти вăтам шкулта военрук-физкультурникре тата шкул директорĕнче (вунă çул) ĕçленĕ. 1991 çулта вырăнти ял администрацийĕн пуçлăхне лартнă. 1993 çултан вара «Шимкусский» хуçалăх ертӳçин тилхепине шанса панă ăна. 2000 çулхи августран хуçалăха ертсе пынипе пĕрлех Тăвайри çу завочĕн директорĕн тивĕçĕсене те туса пынă. Н.М.Яклашкинăн «Тăвай енĕн сумлă çыннисем» кĕнекинче ун пирки çапла çырнă йĕркесем пур: «Ю.Алексеев хуçалăха ăнăçлă ертсе пырать. Пурлăхпа техника никĕсĕ тĕрекленет. Хуçалăхра ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтра тӳлеççĕ, тырăпа утă-улăм парса хавхалантараççĕ. Хастар ертӳçĕне «Хисеп Палли» орденпа та наградăланă».

Çав вăхăтрах «Шимкусский» никĕсĕ çинче хресчен-фермер хуçалăхĕсем йĕркеленнĕ чухне те хуçалăх пуçĕнче вăл пулнă.

Д.Алексеев хресчен-фермер хуçалăхне хастар ĕçпе пулăшакансем татах та çук мар. Валентина Николаевна Кузьмина дояркăнах илер акă. Аллă иккĕре вăл. Ĕмрипе фермăра темелле. Унта амăшĕпе пĕрле ача чухнех çӳреме тытăннă, аслисене пулăшнă. Кайран хăй те унта пынă. «Шимкусский» совхозра, Сергей Илларионов хресчен-фермер хуçалăхĕнче ĕне сунă. «Ĕçре ӳркенмен харсăр хĕрарăм вăл» терĕç ун пирки. Ахальтен-им çуллен тенĕ пекех грамота е парне парса чысласçĕ ăна. Кăçал та вăл, сăмахран, Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçлĕ пулнă. Сергей Артамонов министр хăй аллипе панă ăна, ӳлĕмрен те çитĕнӳсем тума ырă суннă ĕçчене. Хăй çемьеллĕ, ача-пăчаллă, мăшăрлă.

Сăмах майăн каласан, ĕнесене хуçалăх ферминче ирлĕ-каçлă икĕ аппаратпа сăваççĕ, потребительсем патне таса та пахалăхлă сĕт ăсатма тимлеççĕ. «Икĕ-виçĕ ĕнерен пуçланă фермăра, халĕ вĕсен йышĕ 36 пуçа çитрĕ»,–каласа парать Юрий Алексеевич, фермăна куллен пулăшма çӳрекенскер. Унăн хуçалăхпа пурнăç опычĕ паян хресчен-фермер хуçалăхĕн ĕçĕнче питех те кирлĕ пулса тухнă. Кĕçех çитмĕле çитсе пырать вăл çулĕпе, анчах хуçалăх ĕçне пăрахаймасть, мĕншĕн тесен вăл унăнне ăшне-варне кĕрсе вырнаçнă. Тен, çакă вăй-хал хушать те ăна, патварланма май парать. Эпĕ унпа сотовăй телефонпа калаçнă чухне те хăй выльăхсемпе кĕтӳре пулнине каларĕ. «Уйра-ха эпĕ»,–терĕ. Выльăхсем тенĕрен, вĕсен йышĕ халĕ утмăл пуçран иртнĕ, çав шутран сăваканни, маларах асăнтăмăр ĕнтĕ,–36 пуç. Ĕнесен хисепĕ кашни çул ӳссе пырать, кăçал та хушăннă. Вĕсене, вăхăтра пĕтĕлентерсе хăварса, кашнинчен çуллен пĕрер пăру пăхса илме тăрăшаççĕ. Кăçалхи сакăр уйăхра çапла 32 пăру çут тĕнчене килнĕ: 100 ĕне пуçне шутласан, 96,8 пуçпа танлашать. Аван кăтарту. Пăруланă ĕнесем, пĕлетпĕр ĕнтĕ, сĕт хушаççĕ. Çакă кирлĕ те тупăшлăха ӳстерме. Тухăçлă ĕнесен пăрушĕсене кĕтĕве çĕнетсе пыма çитĕнтереççĕ. Пĕлтĕр ку вăхăт тĕлне ĕнесем вăтамран 4139-шар килограмм сĕт антарнă пулсан, кăçалхи кăтарту – пилĕк пин çурă. Акă мĕн чухлĕ сĕт хушнă кăçалхи сакăр уйăхра маттуркасем. Халĕ те талăкра вăтамран вунсакăршар килограма яхăн панине савăнса пĕлтерчĕ Юрий Алексеевич. «Кĕркуннепе, чăн та, чакарчĕç, маларах çирĕм-çирĕм икĕ килограмм ытла та антарнă»,–терĕ вăл. Сĕтĕн пĕр килограмне халăхран халĕ 18 тенкĕпе туянаççĕ пулсан, вĕсенне – 20 тенкĕпе. Сĕт лайăх антарнине кура ĕнесемпе кĕтӳре çӳреме те хавас, паллах. Райадминистрацин АПК аталанăвĕпе экологи пайĕн специалисчĕсем кăçалхи сакăр уйăхшăн туса хатĕрленĕ сводкăна пăхсан, çакă уçăмлăн курăнать: Дмитрий Алексеев хуçалăхĕ пĕлтĕр ку тапхăрта пурĕ 115,9 тонна сĕт туса илнĕ пулсан, кăçал – 170,5 тонна. Пĕтĕмĕшле сăвăм хушăмĕ – 54,6 тонна. Мĕнле çунатланмăнха? Çапах та Алексеевсем хăйсенчен ытларах Сергей Илларионов хуçалăхĕпе мăнаçланаççĕ. «Хресчен-фермер хуçалăхне еплерех çĕклесе ячĕç»,–теççĕ.

Эпĕ Тушкилте пулнă кун вара кĕтӳпе кӳршĕллĕ Шăхаль çынни Владимир Баландаев çӳретчĕ. Кĕтӳре сăвакан ĕнесемсĕр пуçне пушмаксем те пурччĕ. Лăпкăн çисе çӳретчĕç вĕсем Сăхăтпуç енчи уйра. Кĕтӳçĕ те кăмăллă хăйĕн ĕçĕпе. «Укçа начар мар тӳлеççĕ, ĕç хыççăн канмалли, выртса тămалли условисем лайăх. Апат тӳлевсĕр çитереççĕ. Ытти енĕпе те пулăшаççĕ. Тата мĕн кирлĕ? Ан ӳркен кăна ĕçлеме»,–терĕ вăл. Çак шухăшах Валентина Николаевна Кузьмина доярка та палăртрĕ. «Хуçалăхра чуна парса ĕçлеме пур услови те пур»,–пытармарĕ вăл хăй шухăшне. –Кунта ĕçлекенсене пур енĕпе те пулăшаççĕ».

Фермăра, ĕне выльăхсемсĕр пуçне, вăкăрсем самăртаççĕ, сыснасем ĕрчетеççĕ, чăх-чĕп те усраççĕ. «Сутлăх çурасем пур-и?»–ыйтрăм Юрий Алексеевичран. «Пуррисене халăха сутнă, хамăр патĕнче ĕçлекенсене панă. Кĕçех тата çăвăрламалла»,–пĕлтерчĕ вăл. Фермăна çĕнетсех пыраççĕ. Витере таса, çутă. Ĕнесене, сăмахран, икĕ енче усраççĕ. Сума вăхăт çитсен ĕнесем хăйсемех сумалли аппарат вырнаçтарнă пӳлмеке кĕме черет тăраççĕ. Пĕлеççĕ, унта вĕсене хушма тутлă апат кĕтет.

Эпир фермăра пулнă чухне пĕр хурашки пăруласа панăччĕ.

Ĕнесен витинчен тислĕке транспортерпа трактор тележки çине кăлараççĕ. Владимир Маргушов механизатор ăна ферма тулашне турттарса тухатчĕ.

Фермăра пушă самантсенче телевизор пăхмалли, апатланмалли, çывăрмалли пӳлĕмсем тата çăвăнса реххетленме мунча та пур.

–Тӳрĕ чунпа ĕçлеме кăмăл тăвакансене яланах хапăл эпир,–терĕ Дмитрий Юрьевич, хресчен-фермер хуçалăхĕн ертӳçи.

Лашасем те ĕрчетеççĕ хресчен-фермер хуçалăхĕнче. Вун-вуникĕ лаша çеç те мар. Вĕсем тепĕр витере. Унта ытларах Юрий Алексеевичăн шăллĕ Иван Алексеевич Данилов тăрăшать. Ăна-кăна тумалла чухне ытти çынсене те явăçтараççĕ.

Çапах та витесем, ытти условисем темĕнле лайăх пулсан та, тĕрлĕ выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемесĕр продукци хушăнмасть. Çакна Д.Алексеев хресчен-фермер хуçалăхĕнче лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа кунта нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсене çĕнетсех тăраççĕ. Кăçал та акă 57 гектар люцерна çĕнĕрен акнă. Малтанхи лаптăксем 63 гектар йышăнаççĕ. Нумай çул ӳсекен курăксенчен утă хатĕрлеççĕ, сенаж хываççĕ. Утта рулонласа хатĕрлеççĕ. Рулонсене ферма çывăхне турттарса купаланă, ытларахăшне пленкăпа витнĕ, хăйсем каланă тăрăх вĕсенче 600 тонна паха утă упранать. Хуçалăхшăн çителĕклĕ терĕç. Хальхи вăхăтра та витене ĕнесем умне утă хурса параççĕ. Сенаж 200 тонна хывса хăварнă. Кавăн та чылай туса илнĕ, витене кĕрсенех купаласа хунă ку усăллă пылак çимĕçе. Фуражлăх тырă та çителĕклĕ хуçалăхăн. Пĕтĕмпе 527 тонна ытла тырă пухса кĕртнĕ кăçал: кашни гектар вăтамран 27,7 центнер тухăç панă. Пĕрчĕллĕ тĕштырă культурисене Алексеевсем 190 гектар çине вырнаçтарнă, çав шутран çурхи тулă 60, урпа 85, сĕлĕ 45 гектар çинче çитĕннĕ. Халĕ тасатса типтерленĕ тырă кĕлетсенче упранать. Ытлашшине сутаççĕ, пай хуçисене тивĕçтереççĕ. Паллах, чи малтанах вăрлăхлăх тата фуражлăх уйăрнă. Кĕлетсем тата ака лаптăкĕсем те хуçалăхăн, тĕпрен илсен, Ямпулат енче. Кăçалхи тухăçшăн тăрăшса çураки тĕлне çурхи тулăпа урпан элита вăрлăхĕсене пилĕкшер тонна кӳрсе килнĕ. Минераллă удобренисем – аммиак селитри 5, азофоска 20 тонна туяннă. Хир сĕллине пĕтермелли ĕçсем пурнăçланă. Паллах, çĕре лайăх кăпкалатса хатĕрлеме тăрăшнă, кашни культурăнах хăйне кăна тивĕçлĕ агрофон туса пани кирлĕ. Хуçалăхăн çĕр кăпкалатса хатĕрлеме, ӳсентăрансене пăхса тăма тракторсем те, ытти ял хуçалăх техники те пур. Пулса çитнĕ тырра «Енисей» комбайнпа пухса кĕртеççĕ. Тĕп ĕçсене ытларах хăйсен вăйĕпе пурнăçланине каларĕç Алексеевсем. Çав вăхăтрах сезонлă хĕрӳ ĕç вăхăчĕсенче айккинчен те явăçтараççĕ çынсене. Анчах, темĕнле лайăх пулсан та, тивĕçлĕ условисем туса парсан та, вăй хурса ĕçлес текен çамрăксем çав-çавах сахалраххи пăшăрхантарать Алексеевсене. Ĕç вĕтха пуриншĕн те чи малта тăмалла пек. Кĕрĕк арки йăваласа ларнипе малалла каймасть пурнăç. Паянхи кун тĕлне Д.Алексеев хресчен-фермер хуçалăхĕ усă куракан çĕр лаптăкĕ 300 гектартан иртнĕ. Юлашки вăхăтра Йăнтăрчăн шутланакан çĕр лаптăкĕ 17 гектар хушăннă. Ку ĕнтĕ Тăвайри вăрман хуçалăхĕн питомникĕ пулнă вырăналла, тĕрĕсрех, ун çывăхĕнче. Çĕрпе май килнĕ таран тухăçлăрах усă курма тĕв тунă хуçалăхра ĕçлекенсем. Хальхи вăхăтра вĕсене пикенсех кăпкалатса хатĕрлеççĕ. Хальлĕхе 210 гектар ытла çĕре сухаланă, çĕртме сухи тунă, терĕç. Ытти лаптăксем çинче те ĕç пырать. Ку ĕнтĕ çитес çулхи тухăçшăн. Малашлăхшăн.



♦ С.Артамонов тата В.Кузьмина доярка

**И.ГЛАДКОВ.**